**Чăваш юрри**

(«Вĕç-вĕç, куккук»)

Петĕр Хусанкая

Шупашкара килмессерен мана
Çĕн юрă вĕрентеççĕ те туссем –
Сан халăхун миçе кĕвви ĕнтĕ
Чуна вырнаçрĕ тарăннăн кĕрсе.

Киле çитсен юрлатăп вĕсене...
Пĕр хамшăн çеç...
Шухăшласа – туйса...
Чăваш юрри пит тарăн –
Атăл пек–
Ăсупала илеймĕн авăсса.

Чăваш юрри – хура вăрман юрри...
Çĕр пин сукмак асамлăн
йыхăрать
Элле таçта, юмах уçланкине,
Унта çеç ĕмĕт тулнăн туйăнать.

Куккук пулса вĕççе каяс килет,
Çĕтсе каяс килет сĕм вăрманта,
Кайăк пулас ĕмĕт хитре те çав,
Куккук шăпи кăна кăшт хăратать.

Хирте тăри пуçланă кĕвĕ пек
Чунра – ачаш та ырлăхлă тĕнче...
Эх, юррисем!..
Анчах пĕрремĕшне
Вĕрентрĕн эсĕ, Хусанкай пичче!